Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – www.rdub21.ru – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Давыдов-Анатри Василий Иванович**
**Книга: Ӳссен эсӗ кам пулан?**
**Стихотворение: Ҫунатлӑ ӗмӗтсем**

Вӗсем ларнӑ пӳрт ҫумне
Ҫӗнӗ вӑрӑм сак ҫине.
Хӑйсем хуллен пуплеҫҫӗ,
Кулкаласа илеҫҫӗ.
Каҫса кайса Микула
Пуплет ҫинҫе саспала:
– Акӑ курӑр, –
тет, – мана,
Пулатӑпах космонавт,
Ҫутӑ ҫӑлтӑрсем таран
Вӗҫме шухӑш пур-ха ман.
Пӗччен ҫеҫ мар, хампала
Илесшӗн эп Павӑла.
Павӑл уншӑн пит хавас.
Лайӑх ӗҫ-ҫке!
Мӗн калас?
Сиксе тӑчӗ Михала,
Ун та савнӑҫ пулмалла:
– Эпир, чӑн та, маттурсем,
Ӗҫчен ҫынсен шӑллӗсем.
Ҫутӑ манӑн ӗмӗтсем –
Тӑвас тетӗп карапсем.
Вӗҫер халӗ тӳпене,
Тӗлӗнтерер тӗнчене!
Вӗсем ларнӑ пӳрт ҫумне
Ҫӗнӗ вӑрӑм сак ҫине.
Пуҫлать хӗрӳ сӑмахне
Хура куҫлӑ Марине:
– Савӑнатӑп, – тет, – чунтан
Ҫак ушкӑнра пулнӑран.
Кам ҫук пирӗн хушӑра,
Кам ҫук пирӗн отрядра?
Ҫӗр ӑсти те пур кунта,
Инженер та пур кунта,
Художник та пур кунта,
Космонавт та пур кунта!..
Ҫапла пӗрле тӑрӑшсан,
Ӗҫе чунтан юратсан
Ҫут ҫӑлтӑр пек ялкӑшса
Ҫитетпӗрех космоса!

Вĕсем ларнă пӳрт çумне
Çĕнĕ вăрăм сак çине,
Пĕчĕк маттур ачасем –
Çĕнĕ пурнăç калчисем.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.